ISSN 0206 – 4261

1931 ÇУЛТАНПА ТУХАТЬ

# ТĂВАН АТĂЛ

ЛИТЕРАТУРĂПА КУЛЬТУРА ТАТА ИСКУССТВО ЖУРНАЛĔ

ХЫПАР



12+

2017 · 2



И. Алексеев ӳкерчĕкĕ

**Василий КЕРВЕН**

# Çынна çунат паман та...

**Новелла**

Энтри тетене пытарма ăнсăртран лекрĕм. Вăл пире нихăш енчен те тăван тивмест. Кӳршĕ пулнă ĕнтĕ. Яла таврăннăччĕ те – килтисем хурлăхлă хыпарпа шалт тĕлĕнтерсе пăрахрĕç. Харам ĕç тума вара эпĕ те масар çине кайрăм. Унтан таврăнсан асăнтăмăр.

– Мĕншĕн хам вилмен-ши? – хӳхлерĕ унăн арăмĕ, аран-аран утса çӳрекенскер. Куç хыçĕнче ăна эпир, ачасем, Татюк аппа тесе нихçан та чĕнмен. Пирĕншĕн вăл Уксах Энтри арăмĕ пулнă. Энтри тете вара, эп астăвассах, пур ĕçе те хăех тăватчĕ: ĕнине те сунă, урайне те çунă. Нимле ĕçрен те, нихăш нимерен те юлман.

"Икĕ-виçĕ çыншăн ĕçре хуçăлсах çĕре ир кĕрсе выртрĕ", – терĕç масар çинчен таврăннă чухне хĕрарăмсем.

Асăннă хыççăн эпĕ киле васкамарăм, улăха, вăрмана çитсе курма туртрĕ кăмăлăм. Çанталăкĕ питĕ лайăх. Çавăнпа та халĕ ăшра ытларах та ытларах тунсăх. Çын вилме пултарнипе чун-чĕрем нимĕнле те килĕшесшĕн мар.

Çурхи тапхăр вăл – ытла та тĕлĕнтермĕш. Авă, сивĕ хĕл хыççăн пĕрремĕш хут шăна курсан та хĕпĕртетĕн. Тĕнче чĕрĕлнине пĕлтерекен хыпарçă пекех туйăнать çавă, çуллахи вăхăтра йăлтах йăлăхтарса çитерекенскер. Шăна ту-

ратран турат çине вĕçе-вĕçе çӳренине сăнаса киленнĕ самантра хăлхана тунсăхлă сасă пырса кĕчĕ: "Ки-как, ки-как, ки-как!!!" Тӳрех пуçа каçăртрăм. Кайăк хурсен карти иккен. Кусем вара – чăн-чăн çуркуннен ырă хыпарçисем. Мана темшĕн çав çунатлă туссем чуна ытла та çывăх пек туйăнать. Ахальтен мар пулĕ пирĕн халăх хамăр Галактикăна та Хуркайăк Çулĕ тесе ят панă. Хĕрсем хуракăш пулса тăни çинчен темĕн чухлĕ юмах-халап çӳрет. Юрăсем тесен тата... хаваслисем те, хурлăхлисем те пайтах. Çунат пирки этем ĕмĕрех ĕмĕтленнĕрен килнĕ-ши çакă? Лайăх çын хăй те унсăр мар-ха. Унăн чун çуначĕ пур. Малаллах талпăнма.

Хам сисмесĕрех эпĕ: "Кайри – мала, хуркайăксем!" – тесе кăшкăрса ятăм. Вара чĕлхе вĕçне "Салтак юрри" пычĕ тӳрех:

Кайăк хурсем вĕçеç, ай, картипе,
Кайри – мала, тесе ан калăр.
Кайри – мала, тесе, ай, каласан,
Кайăк хур карти, ай, саланать.
Ялти яшсем каяç, ай, салтака,
Кайччăр – пĕтчĕр, тесе ан калăр.
Кайччăрах та пĕтчĕр тесессĕн
Пирĕн çамрăк чунсем хурланать.

Авалхи юрă ку. Тахçанхи. Сехмете кайнă чухнехи. Эпĕ хам та салтак пăтти çинĕ çын. Çав юрра аса та илмен. Хурланма мар – хам салтака юрăхлă пулнишĕн савăннăччĕ çеç. Ача чухне эпĕ хавшакрахчĕ. Шкула та эрни-эрнипех çӳреймен. "Вăрçă вăхăтĕнче тăвата ачапа пĕччен нушаланса сывлăха ир пĕтертĕм", – тетчĕ анне. Çавăнпа эпĕ те тĕреклĕ çуралайман имĕш. Салтака улталаса кайнă пекех пулчĕ манăн. Комиссире врачсем чир-чĕр пирки ыйтсан шарт та март тунтăм. Малтанхи тапхăрта йывăр килчĕ-ха. Çапах та пĕтĕмпех йĕркеленчĕ кайран. Салтакран мана анне çапла каласа кĕтсе илнĕччĕ:

– Эй, ачам, çак куна курасса сунман. Салтака юрăхлă пултăр тесе Турра мĕн чухлĕ кĕлтуман-ши? Патшалăх умĕнчи парăма татрăн, ывăлăм.

Иртнине аса илсе шухăша кайнă май кайăк хур карти те самаях инçете ăсанчĕ. Çавна кура тепĕр юрă чĕлхе вĕçне килчĕ-килчех:

Çӳлелле те пăхрăм, ай, тĕлĕнтĕм
Кайăк хурсем картипе вĕçнинчен.
Шухăшласа пăхрăм, эп тĕлĕнтĕм
Çамрăк ĕмĕр иртсе те пынинчен.

Çамрăк ĕмĕр иртсех кайман пулин те, ачалăх самаях хыçала юлни шухăшлаттарать. Ара, кайăк хурсемпе те çыхăннăччĕ-çке вăл... Тахçан-тахçан...

Пĕррехинче çапла картишне тухрăм. Кайăк хурсен сасси илтĕнет пĕлĕтрен. Унччен те пулмарĕ, пирĕн хур аçи тунсăхлăн темиçе хутчен кăшкăрчĕ те çунаттисемпе çатăлтатса хапха урлах вĕçсе кайрĕ. Эпĕ картишĕнчен чупса тухиччен

урам вӗҫнех ҫитсе пӳртсем ҫийӗпе ярӑнса куҫран ҫухалчӗ. Ҫавна никамах та ӗненес ҫукчӗ, юрать-ха урамра ман юлташсем пулнӑ. Вӗсем ҫӑварӗсене карсах пӑхса тӑраҫҫӗ. Хамӑр хур аҫипе мухтанмалли ҫитрӗ манӑн. Аттепе аннене те каласа кӑтартрӑм. Ӗненмерӗҫ малтанласа. "Хапхана хупса хӑварма ху манса кайнӑ та..." – терӗҫ. Каҫ енне, хур аҫи таврӑнманнине кура, ӑна шырама кӑларса ячӗҫ мана. Ял йӗри-тавра темиҫе ҫаврӑнтӑм пулӗ – ниҫта та ҫук хайхискер. Тепӗр кунхине те таврӑнмарӗ. Юлташӑмсем умӗнче мухтанмалли ҫитрӗ тинех.

– Пирӗн хур аҫи кайӑк хурсемпе пӗрлешсе кайса вӗсене ертсе ҫӳрекенни пулса тӑнӑ. Акӑ вӑл хамӑр ял кӳллине е картишне пысӑк ушкӑн илсе анӗ, – тетӗп.

Ҫапла тата чылай кӗвӗҫтереттӗм юлташсене, анчах тепӗр эрнерен кӳршӗ ялти инке, кукка арӑмӗ, пирӗн хур аҫине кунтӑка хупса илсе килсе пачӗ.

Вӗсем патне кайма унӑн сӑлтавӗ те пулнӑ ҫав.

***

Пӗррехинче, хура кӗркунне, эпӗ шкултан таврӑннӑ ҫӗре инке ларатчӗ килте. Хӑнана килмен иккен – ӗҫпе.

– Кӑҫал хурсене пӗтерес терӗмӗр, – сӑмах пуҫарчӗ вӑл. – Вӗсене пӑхакан текех ҫук. Кӗҫӗн ывӑл та ӳссе ҫитӗнчӗ. Сирӗн вара, – ман еннелле кӑтартрӗ вӑл, – шӑпах кӗтӳ ачи пур. Аҫипе амине пусса ҫиме шел. Питӗ лайӑхскерсем. Тен, эсир хур усрама пуҫлатӑр?

Аттепе аннене сӑмах хушма та памарӑм эпӗ:

– Илмелле! Илмелле! – тапӑртататӑп хаваслӑн. Ара, ман юлташсен кашнинех хурсем пур. Вӗсене тантӑшӑмсем ҫаран ҫине е улӑха ҫитерме хӑваласа тухаҫҫӗ те – эпӗ урамра пӗр-пӗччен тӑрса юлатӑп. Сулланса ҫӳреме те намӑс. Ӗҫсӗр аптранӑскер ку теессӗн туйӑнать. Тепӗр чухне юлташсемпе пӗрле ҫаран ҫине е уя тухатӑп ӗнтӗ, анчах ҫакӑ эпӗ ӗҫленине пӗлтермест-ҫке-ха каллех. Юлташсем хур пӑхаҫҫӗ, эпӗ вара йытӑ хӑвалакан пек ҫеҫ пулса тухать. Йытӑ тенӗрен, вӑл мана питӗ-питӗ кирлӗ. Сунара ҫӳреме. Хур усрама тытӑнсанах аттепе анне анчӑк илсе парасса шанатӑп. Ара, вӑл аван кӗтӳҫӗ-ҫке, хурсене тилӗ тапӑнасран сыхлать.

***

Инке пирӗн пата килсе кайнӑ хыҫҫӑн темиҫе кунран аннепе иксӗмӗр юнашар яла ҫул тытрӑмӑр. Пире апат ҫитерме лартасшӑн тӑвансем. Ман вара хурсене часрах киле илсе таврӑнас килет. Кӗтнӗ самант ҫитрӗ-ҫитрех. Инке пире картишне ертсе тухрӗ.

– Акӑ аҫи, – кӑтартрӗ вӑл.

Чӑнах та, чиперскер иккен. Мана хӑйсен кил-йышӗ патне яхӑнне те ямасть. "Епле тӗреклӗскер, пирӗн урамри пур хура та ҫӗнтерекенни пулать ӗнтӗ", – савӑнатӑп эпӗ.

– Акă ами, – терĕ инке хуçăк çунатлăскер çине кăтартса. Кăмăлăм тӳрех пăсăлчĕ. Ара, чăлах-çке ку. Ял кулать.

– Ку кирлĕ мар, урăххине парса ярăр, – хирĕçлерĕм эпĕ.

– Юрамасть. Ыттисем вĕсен чĕпписем, – ăнлантарчĕ инке. – Ан пăшăрхан, вăл лайăхскер. Кашни çулах вун пилĕкшер çăмарта тăвать, пĕри те тăрă пулмасть.

Ним те тăваймăн, килĕшмех тиврĕ манăн. Аçипе амине хупăрласа тытрĕç те кунтăка лартса çиелтен çӳхе тутăрпа çыхрĕç. Парса ячĕç çапла. Аннепе иксĕмĕр икĕ енчен йăтса пыратпăр. Кăшкăраççĕ кусем. Хамăр яла çитнĕçемĕн вĕсен сасси мана темиçе хут ытларах савăнăç кӳрет: эпир те хур усрама пуçланине пĕлсе юлташсем ăмсанаççĕ-çке.

– Усранă-усранах, – терĕç килтисем, – тепĕр икĕ ама илер. Пурпĕрех пĕрре чăрманмалла.

Мана çав шухăш питĕ килĕшрĕ. Ара, хуçăк çунатлипе намăс çеç куратăп-çке.

Кӳршĕсенчен çăвăр хур амисем илме шутларĕç пирĕннисем. Аннепе иксĕмĕр каçрăмăр юнашара. Амисене кăтартрĕç мана. Чи чиперрисене, шап-шуррипе чăпаррине, суйлама тăрăшрăм эпĕ. Илсе каçрăмăр – чăлаххи вĕсене яхăнне те ямасть. Аçи те çамрăккисен хутне кĕмест тата. Апат пама та уйрăмшар тивет.

– Хăнăхĕç-ха пĕр-пĕрне, – терĕ анне.

Хурсене эпĕ ят пама шутларăм. Аçи валли çийĕнчех тупăнчĕ: Тĕпек. Пуçĕ çинче вăл пур-çке. Çăвăр амасене те илемлĕ чĕнес килчĕ манăн. Пĕри – Шап-шур, тепри – Чăпаркка пулса тăчĕç. Ватă хур ами валли çеç ят шыраса чăрманас килмерĕ. Мĕн пуça ватмалли пур тата? Йăлтах куç умĕнче: Чăлах.

***

Çур çывхарчĕ ерипен. Пирĕн хурсем – аслисем – çамрăккисемпе çав-çавах килĕштерейменççĕ-ха. Иккĕшĕ çеç...

– Капла пулмасть, – терĕ атте. – Ватă амине пусмалла. Унсăрăн çамрăккисене усранин усси çук, çăмартисем тăрă пулаççĕ.

Чăнах та, пĕр ирхине куçа уçрăм та – кăмака умĕнче анне хур тĕкне иртет. Питĕ-питĕ шел пулса кайрĕ чăлах хура. Анне унăн хырăмне çĕçĕпе касса уçрĕ часах.

– Мĕн чухлĕ тĕвĕленнĕ çăмарта! – тĕлĕнчĕ вăл.

Пирĕн хур аçи хапха урлă вĕçсе тухса каясси амине çухатнинчен пуçланчĕ те ĕнтĕ. Мĕншĕн вăл малтанхи кунах çапла тармарĕ? Мĕншĕн кайăк хурсем вĕçсе иртнине курнă хыççăн çеç çав ăнтăлу амаланчĕ унра? Тен, темĕнле сĕм авалхи йăхĕсен инстинкчĕ чĕрĕлчĕ чĕринче. Кайăк хурсен юрри, чăнах та, вăйлă юрату çинчен-ши? Мăшăрăн-мăшăрăн, çирĕп йăлапа, пĕр-пĕрне улталамасăр, пурнаççĕ имĕш вĕсем... Икшерĕн "ачисене" çитĕнтереççĕ. Пĕрне вилĕм пырса çапсан тепри те хăйне хăй тĕп тăвать-мĕн. Çакна акăшсем çинчен каланине пĕлетпĕр-ха, анчах эпир хамăр хурсене хытă юратнăран сăмахне вĕсен çумнех çыпăçтарасшăн.

***

Кӳрше паян пытарса таврӑннӑ пирки асӑнтӑм ӗнтӗ. Унӑн мӑшӑрне вара куҫ хыҫӗнче Уксах Энтри арӑмӗ тесе калаҫҫӗ. Капла упӑшки уксах пулнӑ пек туйӑнать. Темшӗн ҫавна шута илместпӗр. Тӗрӗссипе, Энтрин уксах арӑмӗ темелле. Усал япала ырӑ ҫумнех ҫыпӑҫать час-часах. Эпӗ те, ачапча, Тӗпеке хытӑ кӳреннӗскер, ҫав меслетпех усӑ курма шутларӑм ун чухне. Вӑл вара маншӑн Чӑлах аҫи пулса тӑчӗ.

Халӗ шутлатӑп та, мӗн туртнӑ-ха ӑна тӑван кӗтесе? Тен, юратнӑ мӑшӑрне шыранӑ унта? Пӗрле чӗп ӳстерсе савӑннине аса илесшӗн ҫуннӑ пулӗ.

Пиллӗкмӗш хут ӑна инкесем патӗнчен илсе таврӑнсан атте ҫапла каларӗ:

– Капла пулмасть. Вӑрмана-мӗне анса ларсан кашкӑр е тилӗ ҫӑварне ҫакланӗ. Ҫунаттисене иртсе ярас пулать.

Атте Тӗпек ҫунаттисене хачӑпа кӑчӑрт-кӑчӑрт иртнӗ чухне Энтри тете шӑпах пирӗн пата каҫнӑччӗ.

– Эх, ухмах, – терӗ вӑл хур аҫине. – Ҫамрӑк арӑмусемпе пурӑнма пӗлместӗн. Чӑлаххишӗн нуша куратӑн.

Ҫынсен сӑмахне ӗненсен, Энтри инкекӗ ҫакӑн пек пулса тухнӑ иккен:

Юнашар ялти тӑванӗсем патӗнчен ҫӗрле хӑйӗн туйӗпе таврӑннӑ чухне кӗпер ҫинче лаши чӗвен тӑрса сасартӑк кутӑн чакать те, Татюк, пулас арӑмӗ, урапа айне пулса сусӑрланса юлать. Ун хыҫҫӑн чупса ҫӳренӗ пӗр йӗкӗт ӑна тавӑрасшӑн ҫырмара кӗтсе ларнӑ имӗш. Лашана вӑл хӑратнӑ та ӗнтӗ. Вырӑнпах чылай выртса та тӗрӗс-тӗкел сывалса ҫитеймен Татюк. Сусӑр хӗре (ун чухне вӑл арӑм пулса ӗлкӗреймен-ха) Энтрие пӑрахма сӗннӗ. Пиччӗшӗ те ҫаплах тума хистенӗ, ҫурта сутса хулана куҫма илӗртнӗ. Хӑй вӑл, ялти пӗр ҫурма тӑлӑх хӗре ача ҫураттарса тухса тарнӑскер, кунта та ҫухалса кайман, анчах хальхинче чылай ӑслӑрах пулнӑ, "ҫара ҫерҫипе" ҫыхланман, самай пысӑк пуҫлӑх кӗрӳшӗ пулса тӑма пултарнӑ. Шӑллӗне те хӑйсен кантурӗнчи пӗр чипер, пуян майрапа паллаштарасси пирки сӑмах хускатнӑ пӗрмай.

– Атте-анне вучахне сӳнтерместӗп, – тесе касса татнӑ Энтри.

"Эх, ухмах, чӑлаххишӗн инкек куратӑн", – тени ҫӗнӗрен аса килет халӗ. Тӗпекпе Энтри тете хушшинче пӗрпеклӗх самаях чылай. Куккапа инкен кӗҫӗн ывӑлӗ, выльӑх-чӗрлӗхе – янавар туссене – юратаканскер, хӑй пӑхнӑ хурсем ҫинчен темиҫе ҫул каялла ҫапларах каласа кӑтартнӑччӗ мана: хур амине пӗчӗк чӗпписемпе пӗрле витене лартсан ҫӗрле вӗсене пӑсара тапӑннӑ, унпа ҫапӑҫса чӑлахланнӑ-мӗн сап-сарӑскерсен амӑшӗ.

Пӗлетӗр ӗнтӗ, вырнӑ ана ҫинче кӗркунне енне тӗрекленнӗ ҫӑвӑр хурсем ҫунат вӑйне туйма тытӑнаҫҫӗ, тепӗр чухне самаях инҫе вӗҫме пултараҫҫӗ. Сӑртран ярӑнса анма вӗсемшӗн уйрӑмах ансат. Ҫак кил-йышпа та ҫаплах пулса тухнӑ

час-часах. Чĕпсем çӳле вĕçсе хăпарса кайсан хур аçи, вăйлăскер, хăйĕн маттур "ачисене" хавхалантарса чи малта ертсе пыма пултарнă, анчах мăшăрĕ хуçăк çунаттипе вĕсем хыççăн лăкăштатнине курса вăл тӳрех анса ларнă. Айван чĕпĕсен вара çунаттисен вăйĕпе мухтанас килет. Тепĕр ушкăн патнех вĕçсе анса лараççĕ йăнăшпа. Юттисем хӳтлĕхсĕр юлнăскерсене тĕпĕртеттерме, сăхма, хăвалама тытăнаççĕ. Хур аçи, вĕсен ашшĕ, çавна аякранах кураканскер, ниçта кайса кĕреймен. Мăшăрне пăрахса хăварас – ăна ыттисем кӳрентерĕç... Мĕн чухлĕ пăшăрханман-ши Тĕпек, сахал нуша курнă-ши чăлах мăшăрĕпе, анчах ăна пăрахма шутламан, манайман-мĕн...

Унтанпа вăхăт самаях иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Тĕпек ятлă çавăн пек хур аçи пулнине, вăл хур кайăксемпе тан вĕçме пултарнине çын каласа парсан, хам куçăмпа тахçан курмасан, нимĕнле те ĕненес çукчĕ. Ача чухне татса паман ыйту, хуçи шăтăка пĕрле илсе кĕнĕ вăрттăнлăх мана канăç памасть халĕ: "Эх, ухмах, çамрăккисене юратма пĕлмесĕр, чăлах арăмушăн инкек куратăн", – тесе Энтри тете, Татюк аппа упăшки, Тĕпеке ятласа е ырласа houkarĕ-ши?..

Вăл пирĕн пата каçса ларсан çакăн пек сăмах час-часах пуçарнине астăватăп: "Медицина çултан çул аталансах пырать, касăлса татăлнă ал-урана сыпăнтараççĕ те – Татюка сыватĕç-ха", – тетчĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăр. Кĕтсе илеймерĕ Энтри тете мăшăрĕ сываласса. Хăйсем те çынсем евĕрлĕ чипер пурăнасса.

Юлашкинчен хуçăлмарĕ-ши унăн чун çуначĕ? Çын инкекне пĕрле пайлама пултаракансем яланах телейлĕ пулаканччĕ те...

«Тепĕр тесен, юрать-ха çынна çунат паман. Ăна хапсăнса касакансем тупăнатчех», – тесе шухăшлани те хушăран пуçа пăтраштарнă. Çапах та чун çунатлă пулнине нимĕн те çитеймессĕн туйăнать хальхаççăн.